**Спорт**

# Хĕллехи спорт сезонĕ уçăлчĕ

Ытла та сивĕ хĕл кунĕсем кăçал йĕлтĕрçĕсене хĕллехи спорт сезонне уçма сахал мар кĕттерчĕç. Иртнĕ вырсарни кун, 25 градус таран сивĕ тăнине пăхмасăрах, Муркашри стадионта йĕлтĕрçĕсем пуçтаранчĕçех.



Хĕллехи спорт сезонне уçса ăмăртăва пуçтарăннисене малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Унпа пĕрле йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне курса киленме, çĕнĕ ятсем уçма Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенчи Муркашсен ентешлĕхне ертсе пыракан А.И. Федотов та, республикăри йĕлтĕр спорчĕн пĕрлешĕвĕн президенчĕ А.П. Давыдов тата ыттисем те çитрĕç.

34 командăри 150 ытла йĕлтĕрçĕ тĕрлĕ ӳсĕмсемпе ушкăнсенче ăмăртрĕ.

Уйрăм командăсене илес пулсан пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп вăтам шкулсем хушшинче çĕнтерӳçĕсем Кашмашсем (1-мĕш вырăн), Шетмĕпуçсем (2-мĕш) тата Тойкилтĕсем (3-мĕш) пулчĕç. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче чи вăйлисем – Çатракасси (1-мĕш), Калайкасси ( 2-мĕш), Муркаш (3-мĕш) шкулĕсем.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсенче вĕренекен хĕр ачасем хушшинче 1-мĕш вырăна С. Ефремова (Кашмаш) тухрĕ, 2-мĕш вырăна – Д. Петрова (Шетмĕпуç), 3-мĕш вырăна – А. Майорова (Кашмаш). Арçын ачасенчен чи малти Н. Дмитриев (Шетмĕпуç) пулчĕ, ун хыççăн финиша Д. Скворцов ( Кашмаш) çитрĕ. С. Ершов (Шатракасси) 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ.

Вăтам шкулсенче вĕренекен кĕçĕн ушкăнри – 1995-1996 çулсенче çуралнă хĕр ачасенчен финиша пĕрремĕш Муркаш шкулĕнчи С. Иванова чупса çитрĕ. Çатракасси шкулĕнче вĕренекенсем – И. Лебедева тата А. Ксенофонтова – 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсене тухрĕç. Аслă ушкăнри хĕрсенчен (1992-1994 çулсем) Çатракасси шкулĕнче вĕренекен И. Кириллована çитекенни пулмарĕ. Ун хыççăн дистанцие Калайкасси шкулĕнчи И. Иванова çитрĕ, виççĕмĕш – Çатракасси шкулĕнчи Э. Тихомирова. Арçын ачасем хушшинчи кĕрешĕве те пуçтарăннисем хавхалансах сăнарĕç. 13-14 çулхисен ушкăнĕнче ăмăртнă А. Петров (Çатракасси) пĕрремĕш вырăна тивĕçлипех тухма пултарчĕ. Çак шкултах вĕренекен А. Лебедев 2-мĕш вырăна, Муркаш шкулĕнчи А. Харьков 3-мĕш вырăна тухнипе палăрчĕç. Аслă ушкăнри яшсем хушшинчи кĕрешӳ çак кăтартусемпе вĕçленчĕ: 1-мĕш – А. Чернов (Муркашри лицей), 2-мĕш – А. Моисеев (Калайкасси), 3-мĕш – А. Гониашвили (Муркаш).

Ăмăрту, паллах, ĕç коллективĕсен командисем хутшăннипе татах та интереслĕрех пулчĕ. Хĕрарăмсем хушшинче пĕрремĕш М. Смирнова (Муркаш ял тăрăхĕ), иккĕмĕш Т. Алексеева (Çатракасси шкулĕ), виççĕмĕш Е. Потапова (Муркаш ял тăрăхĕ) пулчĕç. Арçынсем малти вырăнсене çапларах пайларĕç: 1-мĕш вырăна И. Смирнов (Муркаш ял тăрăхĕ), 2-мĕш вырăна А. Воробьев («БТИ» МУП), 3-мĕш вырăна И. Воробьев («БТИ» МУП) тухрĕç.

Çĕнтерӳçĕсен аллинче – кубоксемпе парнесем. Призлă вырăн йышăнакансем те парнесемпе дипломсемсĕр юлмарĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Мăн Сĕнтĕрсем малта

Январĕн 30-мĕшĕнче районти хĕрарăмсен командисем волейболла выляссипе вăй виçрĕç. 9 команда хушшинче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен команди çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕ. 2-мĕш вырăнта – «Моргаушрайгаз» команда, 3-мĕш вырăнта – «Ильинка». Э. Сурина («Ильинка»), М. Овчинникова («Моргаушрайгаз») тата Ю. Петрова (Мăн Сĕнтĕр) уйрăм номинацисенче парнесене тивĕçрĕç.

## Арçын ветерансене чĕнеççĕ

Февралĕн 6-мĕшĕнче вара «Сывлăх» ФСК-ра арçын ветерансен командисем волейболла вылĕç. Спортăн çак енне кăмăллакансене 40 урлă каçнисен вăййине курма Муркаша10 сехет тĕлне йыхравлаççĕ.

**Конкурссем**

## Çĕнтерӳ кунĕ çывхарнă май

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ 65 çул тултарнине халалласа район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕ «Эстафета памяти поколений» ятлă конкурс ирттерет. Унта шкул ачисем, çамрăксен обществăлла организацийсем тата çарпа патриотика клубĕсем хутшăнаççĕ. Конкурсăн тĕрлĕ номинацийĕсемпе пĕтĕмлетӳсене тĕрлĕ вăхăтра тума палăртнă. Çавăнпа та конкурс йĕрки çинчен йĕркелӳçĕсенчен тĕплĕнрех 63-0-63 номерпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пултаратăр.

## «Çĕр пин тĕрĕ çĕршывĕнче»

Çак ятпа иртекен конкурса хутшăнас текенсем хăйсен пултарулăх шайĕпе паллаштаракан, чăвашсен тĕррине кăтартса паракан ĕçсем тăратма пултараççĕ. Вĕсене район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕнче мартăн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

## Юрă-ташă юратакансем валли

йĕркеленĕ ятарлă конкурс та çитес уйăхрах иртĕ. Ачасен фольклор ушкăнĕсем, инструмент ансамблĕсем, ташă ушкăнĕсем вара февраль уйăхĕнче районти «Перепелочка» фольклор фестивальне хутшăнма пултараççĕ. Вĕсем вырăнти халăхăн тĕрлĕ жанрти юрри-ташшине кăтартса пурне те пултарулăхпа савăнтарма пултарĕç.

Конкурссене хутшăнăр, пурнăç таппинчен ан юлăр!

**Районти вĕрентӳ пайĕ.**

**Вĕрентекен çулталăкĕ**

# Учительсемшĕн пысăк тĕкĕ пулĕ

Валентина Владимировна Смирнова Муркашри вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентет. Вăл – районти чи хастар, пултаруллă та пуçаруллă учительсенчен пĕри. Çавăнпа та хăйĕн ĕçне чунтан пурнăçласа пыракан вĕрентекен РФ Президенчĕн, Чăваш Республикин Президенчĕн гранчĕсене тивĕçнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар пулĕ. Çакна вăл ĕçлесе илнĕ.

Тăрăшуллă вĕрентекен тăтăшах Мускавра тата республикăра тухса тăракан журналсенче пичетленет: хăйĕн пуян опычĕпе паллаштарать. Акă кăçал Валентина Владимировна çулталăк пуçлансанах хăйне валли те, хăйĕн ĕçтешĕсене валли те пысăк парне туса пачĕ темелле: «Пуçламăш классенче чăваш чĕлхипе сасă тишкерĕвĕ тăвасси» ятпа методика кăтартăвне Л.А. Романовапа пĕрле кун çути парнелерĕ.

Асăннă методика кăтартăвĕпе вăл кăçал Калайкасси шкулĕнче Вĕрентекен çулталăкне халалланă савăнăçлă уявра паллаштарчĕ. Валентина Владимировна тахçантанпах «Шкул 2100» программăна тĕпе хурса ачасен ăс-тăнне аталантарать. Çавăнпа та вăл çак темăпа тĕпчев ирттерме те чылай вăхăт хушши ĕçленĕ. Мĕншĕн тесен çак ыйту пуçламăш классенче вĕренекенсем валли çирĕплетнĕ программăра йывăр ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Методика кăтартăвĕнчи материала авторсем вĕрентӳ кĕнекисенчи материал çине таянса тунă. Çавăнпах Л.П. Сергеев профессор «вăл ачасен пĕлĕвне кирлĕ шайра тытса тăма май парать, ăна республикăри вĕрентекенсем тахçантанпах кĕтнĕ» тени те йăлтах никĕсленнĕ. Авторсем методика кăтартăвĕнче ачасене кăсăклантарма май паракан тĕрлĕ ӳкерчĕксемпе таблицăсем илсе кăтартни те уроксене интереслĕ те усăллă ирттерме май парĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Çут çанталăк тата эпир**

# Хĕлле пулăшасчĕ туссене

– Пăхăр-ха, пăхăр, кантăкран, – терĕç тăхтавра пĕрле пуçтарăннă 3 «б» класра вĕренекенсем хăйсен класс ертӳçине Зинаида Юрьевнана. Юратаççĕ, унăн чун-чĕре ăшшине туяççĕ вĕсем.

Турат çине çакнă сырăш çинче кайăксем: чĕвĕл-чĕвĕл çерçийĕ, хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпĕ, чи-чи-кăсăйи... тем ĕçлеççĕ, вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе килеççĕ те лараççĕ, тем сăхаççĕ...

– Сырăшсем тăвас ĕçе ытти класра вĕренекенсене те явăçтармалла, пурин те пĕрле ĕçлемелле, – килĕшрĕç вĕсем вĕрентекен шухăшĕпе. Каланă – тунă. Ĕçе пуçăнчĕç, ашшĕ-амăшĕсем те хутшăнчĕç. Акă Олег Ивановăн ашшĕ ывăлĕн ĕçне мухтарĕ, кайăксем валли пĕчĕк «пӳртсене» те пĕрле ăсталарĕç вĕсем.

– Урамра – кăрлач сивви. Шăнаççĕ пирĕн туссем-кайăксем. Вĕсене вăхăтра пулăшмалла, çимелли хурса памалла, – терĕ пĕррехинче Женя амăшне. Кăçал 5 «а» класра вĕренет вăл. Пĕлтĕр «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурсра Раççей лауреачĕ пулса тăчĕ.

– Эпир класпа ĕçе пуçăннă-ха, эпĕ те хутшăнасшăн, – терĕ вăл киле утнă май.

Тĕрлĕ ĕçре пулăшать амăшне çут çанталăкăн тусĕ...

Шкул тавра ӳсекен йывăççем çинче, сывăхри паркра курма пулчĕ ачасем ăсталанă сырăшсене. Иртен-çӳрен те çимелли хурса парать, таврара савăк сасă янăрать...

**Е. ИВАНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр шкулĕ.

# Хатĕр пул эс пулăшма

Шак! шаккарĕ кантăкран
Сарă тумлă кăсăя:
– Ванюк, сирсем ыйхуна,
Сивĕ тивет халь мана.

Чупса тухрĕ васкаса,
Курчĕ – сырăш тап-таса.
Килĕр, туссем, ман патне!
Çийĕр тулă пĕрчине.

Сивĕ тăрать – шартлама.
Хатĕр пул эс пулăшма!
Ырă ĕçпе савăнса
Утрĕ Ванюк шкулалла.

**Женя ГРИГОРЬЕВ.**

Мăн Сĕнтĕр шкулĕ, 5 класс.


**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-6.**

**Результаты открытого аукциона на право заключения договора купли-продажи.**

**23 января 2010 года состоялся открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2010 году, с одновременной приватизацией земельного участка, на котором оно расположено. Победителем аукциона на право заключения договора купли-продажи двухэтажного кирпичного здания с подвалом, расположенное по адресу: 429540, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Треськино, улица Снежная, 13 и земельного участка с кадастровым номером 21:17:020303:66 признан Спиридонов Андрей Анатольевич. Установленная на аукционе цена лота – 209172 руб.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:230701:466, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:230701, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 247104 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:836, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:121301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5712 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:835, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:121301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2976 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170304:95, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:170304, для содержания и обслуживания пруда, площадью 5587 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участница долевой собственности Порфирьева Анна Даниловна, 12.11.1930 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Лесная, д. 28, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Чуманкасинское, на территории землепользования СХПК им. В.И. Чапаева, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:220701 площадью 1,27 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.
2. Порфирьевой Анне Даниловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Лесная, д. 28.

Участник долевой собственности Порфирьев Николай Валентинович, 12.09.1972 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Лесная, д. 28, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Чуманкасинское, на территории землепользования СХПК им. В.И. Чапаева, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:220701 площадью 1,27 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Чуманкасинского сельского поселения.
2. Порфирьеву Николаю Валентиновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Одаркино, ул. Лесная, д. 28.



**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шаошников В.Л.
Номер подписан 02.02.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3950.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.